# Хĕр (Киря) шыв ячĕ ăҫтан тухнă?

(Асаилӳ)

Чăваш республикинче «Киря» ятлă юхан шыв пур. Киря — Сăр шывĕн сылтăм енчи юпписенчен пĕри. Вăл тăршшĕпех вăрман витĕр юхса выртать: Йĕпреҫ станцинчен 6—7 километр кăнтăр-хĕвел тухăҫнерехрен пуҫланать те хĕвел анăҫнелле кайса Сăр (Сура) шывне кĕрсе хутшăнать. Киряна чăвашсем «Хĕр шывĕ» е тӳрех «Хĕр» теҫҫĕ. Унăн чăн-чăн ячĕ чăвашсем каланă пекех «Хĕр» пулнă пулмалла. Анчах та, вырăссем ăна вырăсла транскрипципе ҫавăрса хунă та вырăнти географи ҫырăвĕсенче те, картографире те «Киря» теме пуҫланă; мĕншĕн тесен вырăсла «Хĕр» («ĕ») тесе каламă йывăр. Ҫавăн пирки вырăс чиновниксем чăваш ял ячĕсен тата вĕсен ҫырми-ҫатрисен ячĕсене пурне те пăсса, сăмахран: «Ишек» тĕнине — Ишаки, Упакасси тенине — Абакасы, Юнтапа — Яндобы, Ҫĕрпел — Сюрбеевка тата ыт. те.

Хĕр шывăн ячĕ мĕнле тухса кайни ҫинчен ҫакăн пек легенда пур.

«Тахҫан ĕлĕк Хĕр шывĕ тăрăхĕнче вĕҫĕ-хĕррисĕр сĕм вăрман кашласа ларнă. (Вăл халĕ те вăрманлăхрах-ха.) Вăрманĕнче никамăн та мар шутланнă ирĕклĕ хурт-хăмăр нумай пулнă. Ҫав пыл хурчĕсем ватă йывăҫ хăвăлĕсенче йăва ҫавăрса пурăннă: карас тунă, пыл пуҫтарнă. Ун чухне вăрманĕ те хуҫасăр-мĕнсĕр ирĕклĕн сарăлса ӳснĕ. Хальхи Пăрачкавпа Кудей — Улатăр таранах ҫав вăрман чăвашсенĕн шутланнă. Ҫав вăрманта уй енчен, Ҫĕрпӳ ҫывăхĕнчен, пынă чăвашсем ҫех сайра-хутра ҫаврăнкаласа ҫӳренĕ.

Пĕррехинче, ҫулла, ҫав вăрмана Шĕкĕр ялĕнчен (Ҫĕрпӳ районĕнчи Шĕкĕр— Шугурово ялĕ) виҫĕ чăваш пырса ҫитнĕ. Вĕсем унта хурт-хăмăр шыраса шалтан шалалла кĕрсе кайнă та пĕр ятсăр юхан шыв, халиччен илтмен-курман шыв хĕррине пырса тухнă. Шыв хĕррипе ун юхăмĕ май утса вĕсем питĕ инҫе кĕрсе кайнă. Питĕ илемлĕ пулнă ку ятсăр юхан шыв улăхĕ. Улăх тăрăх ҫамлăх, хырлăх тĕлĕпе чăрăшлăх-хурăнлăх кĕпĕрленсе ларнă, вырăнă-вырăнĕпе унтах ҫаранлă уйланкăсем, чечеклĕ ĕшнесем симĕсленсе выртнă... Акă пĕр тĕлте ҫак чăвашсем хурт-хăмăрлă вырăн тупнă. Пĕр ватă хыр хăвăлĕнче, ҫӳлте, хурт йăви пулнă. (Туратсăр йывăҫ вуллисем тăрăх хăпарма чăвашсен тилхепе евĕрлĕ ҫинҫерех те вăрăм сӳс вĕренсем пулнă. Вĕренĕн вĕҫĕнче чултан е тимĕртен тунă муклашка, чăмăр япала пулнă, ăна салтăнмалла мар ҫыхса хунă. Ҫав вĕрене чăвашсем «ҫивĕт» тенĕ.) Хурт йăви тупнă чăвашсем хыр тăррине ҫивĕт ывăтса янă. Ҫивĕт хыр вуллине явăласа илсен, ун тăрăх пĕр чăвашĕ хыр ҫине хăпарса кайнă, иккĕшĕ ҫĕре, хыр кутне тăрса юлнă. Хурт йăви

патне хăпарса çитнĕ чăвашĕ тин çеç пылне илме пуçланă тет ĕнтĕ. Шăн та лăп çак самантра вĕсем патне темиçе вырăс çынни пырса çитнĕ. Вĕсем те пыл пуçтарма пынă Пăрачкав енчи вырăссем пулнă. «Эсир пирĕн пыла вăрлама килнĕ-и? Кам ирĕк панă сире кунта килсе кĕме?!. Тавай тытатпăр та вĕлеретпĕр вĕсене!»—тесе кăшкăрнă вырăссем. Чăвашĕсем вырăсла лайăх пĕлмен, вĕсемпе калаçма пултарайман: ку сирĕн мар, пирĕн вăрман теме те пултарайман. Вырăссем вăрçма, кăшкăрма тытăнсан хыр кутĕнче тăракан икĕ чăвашĕ хăйсен йывăç çинчи юлташне пăрахсах тара панă. Тарнă та куçран çухалнă.

Вырăссем (улпут çыннисем) хыра хупăрласа илнĕ те ун çинчен чăваша часрах анма хушнă. Чăвашĕ хăранипе анман. Лешсем вара хыра пуртăпа касма тытăннă. Аптранă чăваш унталла-кунталла пăхкалать. Вăл хăпарнă хыр çав ятсăр юхан шыв хĕрринче ларнă пулнă. Вырăссем патне анас — вĕлереççĕ тесе шутланă вăл. Хайхискер, çивĕтне пуçтарса чăмăртать те унăн муклашкаллă вĕçне юхан шыв тепĕр енче ларакан йывăç çинелле ывăтать. Çивĕт вĕçĕ шыв леш енчи йывăç вуллине çавăрса илет. Вара, хай чăваш, çивĕтĕн тепĕр вĕçĕнчен хытă çулăхса тытнăскер, çивĕт туртнипе ярăна парать юхан шыв тепĕр еннелле. Ярăнать те йăпăрт! пырса тăрать хăйĕн çивĕчĕ явакласа илнĕ йывăç çывăхне. Улпут хресченĕсем юхан шыв тепĕр еннех тăрса юлаççĕ. Хăйсенчен хăтăлнă чăваш çине тĕлĕнсе пăхаççĕ те: «Вăт явăл! Этем мар ку — кайăк!»—тесе, аллисемпе пĕçĕ тăрăх шарт кăна çапаççĕ.

Пĕччен юлнă чăваш тарнă юлташĕсене кăшкăрать — лешсен сасси çук! Вара вăл юхан шыв хĕррипе тăвалла, хăйсем килсе кĕнĕ кай йĕр çинелле, утать. Утать-утать Шĕкĕр чăвашĕ — никама та тĕл пулмасть, юлташĕсене те тупаймасть. Каç пулса çитме пуçлать. Çын шикленме тытăнать. «Çĕтсе кайрăм-çке эпĕ! Ăçта каяс, мĕн тăвас?»—тесе пăшăрханать вăл. Шыв хĕррипе пынă чух, малта, курах каять пĕр чипер хĕр юрлакаласа пынине. Хĕрĕ тухьяпа, амасемпе пулнă, тевет çакса капăрланнă, пĕр аллинче йывăç витре пулнă. Тĕлĕннĕ чăваш чарăнать те сывлама чарăнсах ку хĕр ăçталла, мĕн тума кайнине пăхса тăрать.

Унччен те пулмасть — илемлĕ хĕр сукмакпа утса юхан шыв çыранне анать те çыран тăрăх утса шыв ăсма пуçлать. Шывне вăл куркапала ăснă. Хăш-пĕр ăсса илнине витрене янă, хăшне-пĕрне тутанса пăхнă та каллех сапса янă.

Шĕкĕр чăвашĕ хĕр патне пырса ăна сывлăх сунать.

— Хĕрĕм, калаччĕ-ха: мĕншĕн апла эсĕ шыва суйласа ăсатăн? Хăш куркине витрене яратăн, хăшне каялла тăкатăн?— тесе ыйтнă çĕтнĕ чăваш.

— Тĕрлĕрен шыв юхса килет: хăшĕ тутлă, хăшĕ йӳçек... Эпĕ лайăх шывне çеç суйласа ăсса илетĕп, — тенĕ хĕр...

Шывне ăсса тултарсан хĕр çыран улăхне хăпарнă та Шĕкĕр çыннинчен вăл кунта мĕнле килсе лекни çинчен ыйтма пуçланă. Шĕкĕр çынни ăна хăй мĕнле çĕтсе кайни çинчен каласа панă. «Эпĕ пĕччен юлтăм, çĕтсе кайрăм, хăратăп та ĕнтĕ»,— тенĕ вăл.

Хĕр ăна хăй патне хваттере илсе кайнă.

— Акă кĕр пирĕн пӳрте. Эпир кунта аннепе иксĕмĕрех пурăнатпăр,— тенĕ вăл Шĕкĕр чăвашне хăйсен хваттерне çитерсен.

Алăка уçса пĕр пысăк пӳлĕме кĕрсе тăрсанах Шĕкĕр çынни çав тери тĕлĕнсе кайнă. Хĕрсен пӳрт ăш-чикки питĕ чаплă пулнă: унăн стенисем кĕмĕлĕн-мерченĕн йăлтăртатнă, пӳртри япалисем ылтăн тĕслĕн çиççе тăнă, тум-тирĕсем укапа-пурçăнпа йăлкăшнă, унта та кунта ылтăн-кĕмĕл савăт-сапасем курăннă. Хĕрĕн амăшĕ курăнман.

Шĕкĕр çынни тĕлĕннипе: «Тур çырлах анчах!.. Ах, Турă, Турă, мĕнле пуян эсир капла!» — тесе кăшкăрса янă тет.

Турă ятне асăнсанах ылтăн-кĕмĕллĕн курăннă чаплă çурт та, илемлĕ хĕр те куçран çухалнă тет. Пăхать чăваш йĕри-тавра: умра та, хыçалта та, айăккисенче те тăмпа хура тăпраллă стенасем кăна! Вĕсем ишĕлсе йăштартса çеç тăраççĕ. Вăл темĕнле сакăлталлă çĕр шăтăкне çеç кĕнĕ пулнă иккен! Хăранипе, çӳçеннипе унăн пуç çинчи çӳçĕ чăшăл! тăрса кайнă, çан-çурăмĕ сиввĕн сăркаса илнĕ... Тухать те çак çĕр шăтăкĕнчен чăваш текех Турă ятне асăнса, Пӳлĕхçĕне Пихампара кĕл туса хăвăртран хăвăрт малалла чупать... Ик-виçĕ кунтан тин вăл аран-аран пĕчĕк Кушлавăш уйне пырса тухнă.

Унта, тин çеç пуçланакан пĕчĕк ялсенче, çав ятсăр юхан шыв çинче илемлĕ хĕре курни çинчен каласа панă. Пурте тĕлĕнеççĕ.

Аслă вăрманти ятсăр юхса выртнă юхан шыв çинче Шĕкĕр чăвашĕ çавăн пек илемлĕ те асамлă хĕре курнă хыççăн çав шыва «Хĕр шывĕ» теме пуçланă. Вырăссем ăна чăвашсенчен илтсе «Кирь — Киря» теме тытăннă.

*Автортан.* Ку халапа Упакассинчи легендăсене нумай пĕлекен çын Емельян Федотов — чăвашла «Ярччи Хветут Имĕлйанĕ» тенĕскер, темиçе хут та каласа панине

астăватăп. Емельян Федотов 50 çулсене çитсе 1913—1914 çулсенче вилчĕ пулмалла. Халлапсене каласа пама вăл питĕ ăстаччĕ.

Эпĕ ун чух вăл çак Хĕр шывĕ çинчен каласа панине пит хакласах та кайман. Шутлаттăм: мĕнле вара Çĕрпӳ леш енчи Шĕкĕр чăвашĕсем, Кушлавăшран иртсех, Хĕр шывĕ çити çӳренĕ. Вĕсене унта çитсе çӳреме 70—75 çухрăм е 80 çухрăм таран та пулнă.

Ак халĕ кăна, В.Д. Димитриевăн «Чăваш халăхĕн XVIII ĕмĕрти историйĕ» кĕнекине вуланă хыççăн, ку халлап мана тĕлĕнтерсех ячĕ. Унта каланă тăрăх, Сăр вăрманĕнчи Хĕр шыв тăрăхĕ — чăнахах та Шĕкĕр (Шугурово) тата темиçе ялăн шутланнă. Унта вĕсем бортничество ĕçĕпе (пыл пухса) çӳренĕ. Пуçтарнă пылтан темиçе пайне патшалăх хыснине парса тăнă. Ун чух çавăн пек йĕрке пулнă: патшалăх влаçĕ хысна хресченĕсене вăрманти кайăк-пыл хурчĕсене пухма (бортничество), пухнă пылтан пĕр пайне хыснана тӳлесе тăмалли хутсем туса панă.

Çакăнтан шутласан, миçе çул хушши сыхланса усраннă-ха ку халлап чăваш халăхĕ хушшинче! Тата вăл истори чăнлăхĕсемпе те çыхăнса тăнă иккен!

*Апрелĕн 1-мĕшĕ, 1961 çул.*

*Элкер, С. Хĕр (Киря) шыв ячĕ ăçтан тухнă?: [аса илӳ] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 271-274.*